Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

4 (7858) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи кăрлач (январь) уйăхĕн 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Сутуçăсем яла тухаççĕ

Суту-илӳ сукмакĕнче



***Паянхи сăн ӳкерчĕкре эсир сулахайран сылтăмалла Муркашри апат-çимĕç магазинĕн сутуçипе Раиса Алексеевăпа магазин заведующине Галина Спаскинăна куратăр. Уйăхсерен пысăк тавар çаврăнăш тăваканскерсем (коллективра вĕсем 4-ăн) эрнере пĕрре Хорнуй ял тăрăхĕнчи Платкасси ялне куллен кирлĕ таварсем сутма тухаççĕ. Ял çыннисене Муркаш райповĕ пуçарнă çак çĕнĕлĕх килĕшрĕ. Çилтăман-и е çумăрлă çанталăк – сутуçăсем кашни кĕçнерни кун хăйсем патне яла çитессе шанаççĕ тата кĕтеççĕ. Тăрăшуллă ĕçшĕн тав сăмахĕ калаççĕ. Ку вара сутуçăсемшĕн чи пысăк парне!***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Парăмра пулни чыс тумасть

Пенси ыйтăвĕсемпе

Районĕпе обязательнăй пенси страхованийĕн взносĕсене тӳлессипе парăм 2 миллион тенкĕпе танлашать. Республикипе ку кăтарту 201 миллион тенкĕ. Обязательнăй медицина страхованийĕн взносĕсене тӳлессипе парăм 0,14 миллион тенкĕ (республикипе 27 миллион тенкĕне яхăн).

Республикипе чи пысăк парăмлисем шутĕнче «Волжская текстильная компания» ОАО (60,2 миллион тенкĕ), «Чувашавтотранс» ГУП филиалĕсем (39,9 миллион тенкĕ), «СУОР» ООО (8,6 миллион тенкĕ), «Авиалинии Чувашии» (5,9 миллион тенкĕ), «Железобетон» ООО (5,4 миллион тенкĕ), «Ядринский машиностроительный завод» (3,3 миллион тенкĕ) пулсан, районта Муркашри сĕт завочĕн парăмĕ 1 миллион та 250 пин тенкĕпе, «Моргаушрайбыт» обществăн 620 пин тенкĕпе танлашаççĕ.

Граждансен прависене хӳтĕлес тĕлĕшпе Пенси фончĕ саккунпа пăхнă пур майсемпе те усă курма тăрăшать. Вăл шутра парăма тӳлесе татассипе требованисем тăратнинчен тытăнса парăмçăсен расчет счечĕсем çине инкасса порученийĕсем ярса парасси, суд приставĕсен службисем тĕлĕшпе парăма саплаштарма парăмçă пурлăхĕпе усă курасси пирки йышăну тăвасси таранах. Страхователÿсен тӳлев дисциплинин ыйтăвĕсене эрнесеренех РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн комиссийĕнче пăхса тухаççĕ. Çапла вара 764 миллион тенкĕ шыраса илме май килнĕ.

РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева палăртнă тăрăх обязательнăй пенси страхованийĕ валли пухăннă взноссем хальхи пенсионерсене пенси тӳлесе тăма каяççĕ, хальхи ĕçченсен пулас пенсийĕн виçи те унран килет. 2010 çултан тытăнса Пенси фончĕ обязательнăй медицина страхованийĕн взносĕсене куçарассине те йĕркелесе тăрать. Вăл тӳлевсĕр медицина пулăшăвĕ парассипе çыхăннă. Предприятисен ертӳçисем çакна пĕлсе тăма тивĕç.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

## «Пирĕн пĕрле халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн ĕçлемелле»

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

***Иртнĕ юн кун пирĕн республикăра Пĕрлехи информаци кунĕ иртрĕ. Республикăри влаç органĕсен представителĕсем 3 ушкăна пайланса район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсемпе пĕрле Мăн Сĕнтĕр, Катькас тата Ильинка ял тăрăхĕсенчи предприятисемпе организацисенче, учреждениçенче пулчĕç, вĕсенчи ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç.***

### СЫВЛĂХА СЫХЛАС ĔÇ СИСТЕМИНЕ ÇĔНЕТМЕ РАЙОНА – 22 МЛН. ТЕНКĔ

Пĕрлехи информаци кунне кĕртнĕ пĕрремĕш ыйтупа – сывлăха сыхлас ĕç системине модернизацилессипе Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, районти тĕп больницăн тĕп врачĕ В.Г. Данилов тухса калаçрĕ. Владислав Григорьевич çакна палăртрĕ. Пĕтĕмпе çак ĕçе туса ирттерме Раççейĕпе 450 млрд. тенкĕ уйăрнă. Çав шутран пирĕн республикăна – 4 млрд. та 136,5 млн. тенкĕ. Вĕсенчен 2 млд. та 24,948 млн. тенкине – 2011 çулта. Тĕпрен илсен çав укçатенкĕ медицина учрежденийĕсене тĕплĕ юсама, медицина оборудованийĕ туянма, медицина системине информатизацилеме тата чирлисене стандарт системипе сиплеме усă кураççĕ.

Республикăра 17 хула тата 8 ялти медицина учрежденийĕсене тĕплĕн юсама палăртаççĕ. Кунта акă мĕн палăртмалла. Тĕпрен илсен районсем хушшинчи медицина учрежденийĕсене юсас тĕллев лартнă. Пирĕн районти Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ районти тĕп больницăн çивиттине малтанласа 2012 çулта юсама кĕртнĕ пулсан республика программине, Юрий Александровичпа Владислав Григорьевич çине тăнипе, кунти тĕп врач Л.И. Самушковăн çак ĕçĕн проекчĕ хатĕр пулнипе больница çивиттине 2011 çулта туса ирттермелли мероприятисен шутне куçарма май килчĕ. Мăн Сĕнтĕр больницин çивиттине тĕплĕн юсама пурĕ 3 млн. тенкĕ уйăраççĕ.

Медицина системине информатизацилессине илес пулсассăн çакна палăртмалла. Компьютерсем туянмалла пулать. Кашни çын мĕнпе чирленине, вĕсене мĕнле сипленине тӳрех компьютера кĕртеççĕ. Медицина сферинче пĕрлехи информаци сечĕ пулмалла. Çак ĕçе туса ирттерме пирĕн района 1 млн. та 900 пин тенкĕ ытла укçа уйăраççĕ. Район та ку ĕçе укçатенкĕ хывать.

Халĕ медицина оборудованийĕ туянасси пирĕн района хăш енчен пырса тивни çинчен. Юлашки çулсенче халăха диспансеризаци витĕр кăларса чир-чĕре вăхăтра тупса палăртса çийĕнчех сиплесси çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ районта. 40 çултан иртнĕ хĕрарăмсене Шупашкар хулинчи 1-мĕш номерлĕ хула больницине кăкăр парне тĕрĕслеттересси – чи малти вырăнсенчен пĕри. Çакă вĕсен кăкăр шыççи аталанассинчен сыхланма, вăхăтра сиплев ĕçне пуçлама май парать. Халĕ вара сывлăха сыхлас ĕç системине çĕнетмелли программăпа килĕшӳллĕн пирĕн района 5 млн. тенкĕ тăракан çак медицина оборудованийĕ-мамограф килмелле. Ку çеç те мар. Паянхи кун ыйтакан çĕнĕ йышши УЗИ аппаратпа фибробронхоскоп та пулĕ. Çапла вара пĕтĕмпе 7 млн. та 200 пин тенкĕлĕх çĕнĕ йышши медицина оборудованийĕпе пуянланĕ районти тĕп больница. Пĕтĕмпе вара çак программăпа килĕшӳллĕн пирĕн района 22 млн. тенкĕ уйăраççĕ.

Сывлăха сыхлас ĕçе çĕнетмелли программăпа килĕшӳллĕн чире стандарт системипе сиплемелле. Мĕне пĕлтерет-ха ку? Пĕр тĕслĕхпе ăнлантарсан уçăмлăхрах пулĕ. Калăпăр, ӳпке шыççипе больницăра выртать çын. Çак чире юсама 21 кун кирлĕ пулать. Ăна сиплемелли эмелсем мĕнлисем кирлине палăртаççĕ, çак чире сипленĕ май обязательнăй йĕркепе куç тухтăрĕ, невролог тата ытти врачсем патĕнче пулса тĕрĕсленмелле. Çакă йăлтах тӳлевсĕр.

(Вĕçĕ 2 стр.).

Хаксем

## Ăçта йӳнĕрех?

Район администрацийĕ район территорийĕнче вырнаçнă лавккасенчи социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç таварĕсен хакĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тăрать. Çавна май январĕн 18-мĕшĕнче ку енĕпе яваплă ĕçченсем апат-çимĕç сутакан пилĕк лавккара пулса курчĕç, сентресем çинчи хаксене танлаштарчĕç.

**Колонкăсенче: 1. Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсем. 2. «Самообслуживание» лавкка. 3. «Продукты №1». 4. «Визит». 5. «Родничок». 6. «Елена»**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Чăх (тукмаксăр пуçне),кг | 104 | 108 | 110 | 73 | 110 |
| Услам çу, кг | 276 | – | 156 | 195 | 106 |
| Тип çу, кг | 70 | 66 | 63 | 65 | 70 |
| Сĕт, çу шайĕ 3,2 проц., кг | 32 | – | 42 | – | 31,5 |
| Çăмарта, 10 шт | 4,2 | 3,6 | 3,6 | 3,8 | 3,5 |
| Сахăр песукĕ, кг | 47 | 40,5 | 45 | 41 | 47 |
| Тăвар, кг | 6,5 | 8,5 | 8 | 8,2 | 8,5 |
| Тулă çăнăхĕ, кг | 16,5 | 19 | – | 18 | 17,5 |
| Тулăпа ыраш çăкăрĕ, кг | 20,8 | 20,8 | 20,8 | 20,8 | 20,8 |
| Рис, кг | 38 | 36 | 35 | 34 | 38 |
| Вир кĕрпи, кг | 43 | 40 | – | 35 | 30 |
| Хура тулă кĕрпи, кг | 93 | – | – | 87 | 81 |
| Вермишель, кг | 24 | 23 | 23 | 22 | 23,5 |
| Пуçлă сухан, кг | 33 | 36 | 34 | 31,5 | 35 |

2010 çул кăтартăвĕсем

## Промышленность

Иртнĕ çул районĕпе пĕтĕмпе 1548405,7 пин тенкĕлĕх продукци туса хатĕрленĕ. Ку вăл унччченхи çулхипе танлаштарсан 147,5 процент пулать. Вăл шутран промышленность продукцине туса кăларасси 69,5 процент ӳснĕ, пĕтĕмпе 1188388,4 пин тенкĕпе танлашнă. 2009 çулхинчен ăнăçлăрах ĕçленĕ предприятисем шутĕнче Муркашри кирпĕч завочĕ (100,5 процент), «Сундырь-Хлеб» ООО (105 процент), «Муркашри сĕт завочĕ ОАО (103,6 процент), «Сеспель» ЗАО (274,7 процент), «Моргауши-Хлеб» ООО (106,5 процент), Муркашри тата Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсем (105,4 тата 108,7 процент), «МСО «Моргаушская» ЗАО (261,3 процент), «Моргауши-межрайгаз» филиалĕ (116,4 процент).

Шел пулин те «Моргаушавтотехсервис» ОАО (60 процент), «Моргаушкорм» ООО (73,4 процент), «Вита» ООО (37,7 процент), Муркаш почтамчĕ (92,1 процент) хăйсен ĕç кăтартăвĕсене унччченхи тапхăртипе танлаштарсан чакарнă.

**Э. СИМАКОВА,**
**район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ.**

Йыхравлатпăр

## Утарçăсене пĕлме

Январĕн 24-мĕшĕнчен пуçласа пĕр уйăхлăх вĕренӳ иртет. Унта пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи утарçăсемпе ялта пыл хурчĕ тытакан уйрăм çынсене чĕнеççĕ. Пĕлӳ илес текенсен Шупашкарти агропромышленность комплексĕнче ĕçлекенсен квалификацине ӳстерекен института пымалла. Вĕренӳ 8 сехет те 30 минутра пуçланать. Кунта эсир хурт-хăмăр ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсемпе, сиплев мелĕсемпе паллашăр.

Адресĕ: Шупашкар хули, Пирогов урамĕ, 16-мĕш çурт. Вĕренӳ хакĕ – 1000 тенкĕ. Вĕренекенсене пурăнма общежитире вырăн параççĕ. Вĕренӳ курсне вĕçленĕ хыççăн ятарлă диплом алла илĕр.

**П. СЕМЕНОВА,**
**хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç агентствин Муркашри сутуилӳпе хатĕрлев пункчĕн хатĕрлевçĕ зоотехникĕ.**

Саламлатпăр

Юратнă çыннăмăра – Итакачкасси ялĕнче пурăнакан **Анатолий Константинович ПЕТРОВА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Сывлăху çирĕп пултăр, кун-çулу вăрăм та телейлĕ килтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан, кĕрекӳ тăвансемпе юлташсенчен пуян пултăр, ачусен, мăнукусен ырлăхне курса савăнмалла пултăр, мĕн ĕмĕтленни-шутлани пĕтĕмпех пурнăçлантăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕ, тăватă мăнукĕ, Александровсен, Петровсен, Паргеевсен, Карповсен, Ланцевсен çемйисем.**



Юратнă ывăлăма, пиччене – Илпеш ялĕнче пурăнакан **Владимир Васильевич ДИМИТРИЕВА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр сунатпăр сана. Телейпе ăнăçу яланах юнашар çӳреччĕр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр, çемйӳнте татулăхпа килĕшӳ хуçаланччăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, Димитриевсен, Волковсен, Федькинсен çемйисем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, юратнă аннене, асаннене, йăмăка, аппана, юлташа – Итакачкасси ялĕнче пурăнакан **Клавдия Никифоровна ПОТЯНОВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, татах та нумай пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр.

Сана юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр. Сăн-питӳнте яланах йăлкулă çиçтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан таталтăр, кĕрекӳ яланах тăвансемпе пуян пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕ, аппăшĕ, йăмăкĕ, тăванĕсем, тус-юлташĕсем, хăй вĕрентнĕ ачисем, пĕрле ĕçленĕ учительсем.**

# 13 процент чухлĕ каялла таврăнать

**Налук саплаштарăвĕ**

***Налук саплаштарăвĕ тăватă ушкăна пайланать. Пĕрремĕш ушкăна (имущественные налоговые вычеты) пурлăхшăн тăкакланă – пурăнмалли çурт-йĕр тунăшăн, ăна тума çĕр лаптăкĕ тата хваттер туяннăшăн – укçа-тенкĕрен шутласа параççĕ. Иккĕмĕш ушкăна (социальные вычеты) аслă вĕренӳ заведенийĕсенче пĕлӳ пухнăшăн, медицина учрежденийĕсенче сипленнĕшĕн тăкаклани кĕрет. Çапла вара çынсем тупăшран тӳленĕ налукăн пĕр пайне, вун виçĕ процентне, патшалăх каялла тавăрса парать. Ку ыйту чылай çынна хумхантарать, хăшĕ вара çак йĕрке пирки ăнкарса та каймасть. Çавăнпа та çӳлерех асăннă икĕ ыйтăва уçăмлатма Раççей Федерацийĕн Налук службин Чăваш Республики тăрăх районсем хушшинчи 6-мĕш № инспекцийĕн патшалăх налук инспекторĕпе С.М. ИГНАТЬЕВĂПА калаçу ирттертĕм.***

**– Светлана Михайловна, пурăнмалли çурт-йĕр тунă тата туяннă чухне çынсем тупăшран тӳленĕ налук суммине каялла тавăрас йĕркепе тĕплĕнрех паллаштарăрха, тархасшăн?**

– Çапла, Раççей Федерацийĕн территорийĕнче çĕнĕ çурт тунă тата хваттер, пӳлĕм е вĕсенче пай туяннă чухне тăкакланă укçа-тенкĕрен налук шучĕпе тӳленĕ 13 процентне каялла тавăрса параççĕ. Çакна çынсене çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма хавхалантарас тĕллевпе йĕркеленĕ. 2008 çултан пуçласа 224 № Федераллă Саккунпа килĕшӳллĕн ăна 2 миллион тенкĕрен шутласа параççĕ.

**– Акă, тĕслĕхрен, 2010 çулта 2 миллион тенкĕпе çурт-йĕр туяннă. Унта 100 пин тенкĕлĕх юсав ĕçĕсем ирттернĕ. Çапла вара тăкак икĕ миллионран иртрĕ, ку чухне епле шутлаççĕ?**

– Пур пĕрех пурлăхран шутласа паракан налук саплаштарăвне 2 миллионран шутласа параççĕ.

**– Пурлăхран пĕр хут паракан суммăна тивĕçес пулсан мĕнле документсем хатĕрлемелле-ха? Енчен те тăкак çак суммăран пĕчĕк пулсан налук органне каймалла е...**

– Çак укçа-тенкĕне тивĕçес текенĕн налук инспекцине пурлăх харпăрлăхра пулни пирки çирĕплетекен документсем, декларации тăратмалла, укçана счет çине каялла тавăрса пама ыйтса заявлени çырса памалла. Кунсăр пуçне налук саплаштарăвне илме май паракан укçа-тенкĕ тăкакланине кăтартса паракан ытти документсене те хатĕрлесе памалла.

**– Çĕнĕрен çĕкленекен çуртра хваттер туянаканăн ку тĕлĕшпе мĕн пĕлмелле.**

– Ĕçе пуçăнма хваттере сире панине çирĕплетекен акт е ăна регистрациленине çирĕплетекен свидетельство пулмалла.

**– 2010 çулхи январĕн 1-мĕш числинчен пуçласа çĕнĕ саккун вăя кĕчĕ. Çапла вара çурт-йĕр лартма çĕр лаптăкĕ туяннăшăн налук саплаштарăвне 13 процент чухлĕ тивĕçме ирĕк пур. Ку тĕлĕшри декларацие хăçантарах çырма юрать?**

– Çак укçа-тенкĕ саплаштарăвне çурт-йĕр çĕкленĕ, ăна харпăрлăха куçарнă хыççăн кăна тивĕçме ирĕк пур.

**– Аслă пĕлӳ илнĕшĕн налук саплаштарăвне тивĕçес йĕрке еплерех тата?**

– Статуса çирĕплетекен тивĕçлĕ лицензи е ытти документсем илнĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсенче пĕлӳ илекенсемшĕн тӳленĕ укçа-тенкĕрен налук саплаштарăвĕ илме пулать. Кунта Раççей тата ют çĕршыври заведенисене те шута илеççĕ. Ăна налук тӳлекен вĕренекенсем, налук тӳлекен ашшĕ-амăшĕ (опекун, попечитель), çавăн пекех налук тӳлекен аппăшĕсем е пиччĕшĕсем тивĕçме пултараççĕ. Çапла вара вĕренӳ заведенийĕсене тӳлесе тăкакланă укçа-тенкĕн пĕр пайĕ 13 процент чухлĕ сирĕн патна каялла таврăнать. Палăртса хăварапăр, ку йĕрке мăшăршăн е мăнукшăн тӳленĕ чухне пырса тивмест.

**– Çемьере куçăмлă майпа аслă пĕлӳ илекен 22 тата 20 çулхи студентсем пур, вĕсемшĕн ашшĕ-амăшĕ налук саплаштарăвĕ тивĕçеет-ши?**

– Çапла, вĕсемшĕн ашшĕ-амăшĕ тӳлесе тăкакланнă укçа-тенкĕн 13 процентне саплаштарма пултарать. Анчах та РФ Налук кодексĕн 219 статйин 2 пайĕпе килĕшӳллĕн çак шай 120 пин тенкĕрен иртме пултараймасть. Çавăн пекех ку йĕрке куçăн мелĕпе аслă пĕлӳ илекенсене кăна пырса тивет. Харпăр хăй вĕреннĕшĕн налук саплаштарăвне тивĕçес пулсан вара куçăмлă, куçăмсăр тата куçăмлă-куçăмсăр мелсем кĕреççĕ. Вĕренӳшĕн амăшĕн капиталĕпе усă куракансем налук саплаштарăвне тивĕçмеççĕ.

**– Тĕслĕхрен, эпĕ аслă вĕренӳ заведенийĕнче пĕлӳ илетĕп, уншăн пĕр çулталăк хушшинче 85 пин тенкĕ тăкаклатăп. Çав хушăрах манăн ача та куçăмлă мелпе аслă пĕлӳ илет. Уншăн 40 пин тенкĕ тăкаклама тивет. Налук саплаштарăвĕ иккĕн тĕлĕшпе те пырса тивет-и?**

– Çапла, ку тĕслĕхре эсир хăвăр пĕлӳ илнĕшĕн кăна мар, ачашăн та тивĕçме пултаратăр.

**– Ку йĕрке ытти шайри вĕренӳ заведенийĕсенче пĕлӳ илекенсене пырса тивет-и?**

– Çапла, ку укçа-тенкĕне ытти шайри вĕренӳ заведенийĕсенче пĕлӳ илекенсем те илме пултараççĕ. Вăл шута ача-пăча сачĕсем, вăтам шкулсем, спорт тата музыка шкулĕсем, вĕренӳ центрĕсем, автошкул кĕрет. Вĕсем патшалăх е муниципаллă тытăмри заведенисем пулмасан та пултараççĕ. Чи пĕлтерĕшли вара вĕсен тивĕçлĕ документ е лицензи пулмалла. Çулталăк хушшинче саплаштарăва пĕтĕмпех илме май килмерĕ пулсан унăн тепĕр пайĕ çитес çул валли куçмасть.

**– Вĕсем тĕлĕшпе налук органне декларации тăратас вăхăт еплерех тата ăна валли мĕнле документсем хатĕрлемелле.**

– Ку енĕпе декларации тăратас пулсан пирĕн пата кирек хăш вăхăтра та килме юрать. Налук саплаштарăвне вара юлашки виçĕ çулшăн шутласа параççĕ. Ăна валли тӳленине çирĕплетекен документсем, паспорт, килĕшӳ, ача хăçан çуралнине тата тăванлăха çирĕплетекен документсем, опекăпа попечительство распоряженийĕ, 2-НДФЛ формăллă справка, лицензи копийĕ кирлĕ.

**– Медицина учрежденийĕсенче сипленнĕшĕн тăкак хакне саплаштараканăн мĕн пĕлмелле?**

– Лицензиллĕ медицина учрежденийĕсенче мăшăра, ашшĕ-амăшне, 18 çула çитмен ачасене сипленĕшĕн (ют çĕр-шыври медицина учрежденисем кĕмеççĕ), медицина услугипе усă курнăшăн, врач рецепчĕпе медикаментсем (ятарлă перечене кĕртнисем кăна) туяннăшăн пĕр хут паракан налук саплаштарăвне 13 процент чухлĕ тивĕçме пулать. Медицина услуги шутне диагностика, профилактика, сиплев (ятарлă перечене кĕртнисем кăна) ĕçĕ, санатори учрежденийĕсенче медицина реабилитацийĕ ирттерни кĕрет. Налук саплаштарăвне мĕн чухлĕ тăкакланнă укçа-тенкĕрен шутласа параççĕ, анчах та 120 пин тенкĕрен ытлашшине шутламаççĕ. Çакă вара тăватă категорие те пырса тивет. Пĕр тĕслĕх илсе кăтартам. Иванов сиплевшĕн 45 пин тенкĕ тăкакланă, 30 пинлĕх медикаментсем туяннă, çавăн пекех аслă пĕлӳ илнĕшĕн 20 пин тенкĕ тӳленĕ. Пĕтĕмĕшле вара 95 пин пĕтернĕ. Çапла вара налук саплаштарăвне пĕтĕмĕшле тăкакран шутласа параççĕ.

Налук саплаштарăвне тивĕçес тесен пирĕн пата декларации тăратмалла, унпа пĕрле тăкакланнине çирĕплетекен документ, медицина учрежденийĕпе, страхлакан компанипе тунă килĕшӳсем е полис, медицина учрежденийĕн лицензи копийĕ, сиплевшĕн тӳленĕ, çавна май унпа тăванлăха çирĕплетекен (çуралнă хут, пĕрлешнине çирĕплетекен свидетельство) документсем, 2-НДФЛ формăллă справка пулмалла.

**– Хăйсем ирĕкĕпе пенсин пухăнакан пайне пысăклатас тĕлĕшрисене пырса тивет-и ку саккун?**

– Çапла, ку саккун вĕсене те аякка хăвармасть. Çак йĕрке патшалăх тытăмĕнче тăман пенси фончĕсемпе килĕшӳ тунă, çапла майпа пенси взносĕ тӳлекенсене тата страхлакан организаципе килĕшӳ тунă, çапла майпа ирĕклĕ пенси страховани тĕлĕшпе страховани взносĕ куçаракансене пырса тивет. Кун пек килĕшĕве харпăр хăй ячĕпе кăна мар, çывăх ытти çынсем валли те тума пулать. Çапла вара ку тĕлĕшпе те налук саплаштарăвне 13 процент чухлĕ тивĕçме ирĕк пур.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

**Уявсем**



## Орининсем савăнма пĕлеççĕ

Январь уйăхĕ канмалли тата уяв кунĕсемпе пуян. Уйрăмах Çĕнĕ çул уявĕн кунĕсенче интереслĕ мероприятисем сахал мар пулса иртрĕç.

Сурхури уявĕ çинчен те манмарĕç Оринин тăрăхĕсем. Тус-юлташĕсем, çывăх тăванĕсем, кӳршипĕлĕшĕсем патне кайса пĕр-пĕрне саламларĕç, ырă сунчĕç, мăйăрпа хăналарĕç, ĕмĕрхи йăла-йĕркесене аса илчĕç, юрăсем юрларĕç.

Çамрăксем ĕлĕкхи йăласене те манмарĕç. Ялтан яла, килтен киле çветке çӳрерĕç. Чăвашсен йăли-йĕркипе вара çветке çӳрекенсен Кăшальня кунĕсенче шыва кĕмелле. Нумай-нумай çамрăк Кăшальня уявĕнче Оринин патĕнчи пĕвере шыва кĕчĕ.

Кунпа пĕрлех çамрăксем «Оринино» хуçалăх парнисене çĕнсе илессишĕн спорт ăмăртăвĕсене те хутшăнчĕç, пултарулăхпа палăрчĕç.

**И. СКВОРЦОВА,**
**Орининти Культура çурчĕн директорĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: шыва кĕрекен çамрăксем сахал мар пулчĕç.**

**Официально**

**Моргаушская территориальная избирательная комиссия**
**РЕШЕНИЕ**
**17 января 2011 года № 4/1**
**Об аннулировании регистрации Сурикова Александра Сергеевича, кандидата на должность главы Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

В соответствии с пунктом 30 статьи 38 Федерального закона «Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации» и на основании поступившего от кандидата на должность главы Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Сурикова Александра Сергеевича заявления от 14 января 2011 года Моргаушская территориальная избирательная комиссия **решила:**

1. Аннулировать регистрацию кандидата на должность главы Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики Сурикова Александра Сергеевича, 1974 года рождения, проживающего в деревне Сендимир Моргаушского района Чувашской Республики, выдвинутого Моргаушским районным Чувашской Республики местным отделением Всероссийской политической партии «ЕДИНАЯ РОССИЯ» (решение от 6 августа 2010 года № 71/2 п.5).

2. Удостоверение кандидата на должность главы Орининского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики на имя Сурикова Александра Сергеевича считать недействительным.

3. Опубликовать настоящее решение в газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Председатель Моргаушской территориальной избирательной комиссии Л.Ю. ТАРАСОВА.**
**Секретарь Моргаушской территориальной избирательной комиссии В.Н. ФОМИНА.**

# «Пирĕн пĕрле халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн ĕçлемелле»

**Пĕрлехи информаци кунĕнчен**

**(Вĕçĕ. Пуçл. 1 стр.).**

Енчен чирлĕ çын пĕр больницăра выртнă пек чух урăх органа УЗИ пăхтарас тет пулсан е ытти урăх чирпе çыхăннă процедурăсене ирттерме кăмăл тăвать пулсан куншăн тӳлес пулать. Урăхла каласан çынна вăл е ку чирпе больницăна хураççĕ пулсан çав чире тĕплĕн юсаççĕ. Урăхла каласан стандартпа юсаççĕ – çав чире юсама мĕн пăхса хăварнă – çавна çеç тăваççĕ. Куншăн пĕр пус укçа та тӳлемелле мар. Стандартпа сиплемелли чир-чĕр шутне 45 чире кĕртнĕ хальлĕхе. Асăннă программăна пурнăçланă 2 çул хушшинче çав список тата та пысăкланма пултарать.

Владислав Григорьевич çакна палăртрĕ. Асăннă программа халăха медицина пулăшăвне парассине централизацилес йĕрке çине куçарать. Анчах çакă халăхри пек каласан «рядовой» çынсене нихăш енчен те пырса тивмест. Пирĕн районта икĕ тĕп больница. Кун пекки республикăра урăх çук. Владислав Григорьевич çакна палăртсах каларĕ:

– Мăн Сĕнтĕр больницине хупаççĕ-им, тесе ыйтаççĕ манран. Ăçтан шухăшласа тупаççĕ тулĕк сăмахĕсене. Ку таранччен те пĕрре те пулман кун пек шухăш. Пачах урăхла. Мăн Сĕнтĕрти больницăн «районти 2-мĕш номерлĕ тĕп больница» статусне сыхласах хăваратпăр. Çакă кунта вăл е ку чире сиплекен специалистсене ĕçе илме май парать. Çапла майпа хальхи вăхăтра Мăн Сĕнтĕрти больницăра хальхи вăхăтра гинеколог, ЛОР врач çук пулсан пыра-киле вĕсем те пулĕç, – терĕ вăл.

Халăха медицина пулăшăвне централизациленĕ майпа пани вăл е ку медицина ĕçченĕ ĕççĕр тăрса юлассине те пĕлтермест.

Никам та ĕççĕр тăрса юлмасть. Хăш-пĕр персоналăн ĕçне çур ставкăпа хăварса икĕ ĕç хушма тивет. Калăпăр, сестра-хозяйкăна çур ставкăпа хăварса, ăна тепĕр çур ставкăпа буфетчица ĕçне тума çирĕплетеççĕ т.ыт. те, - ăнлантарчĕ Владислав Григорьевич. – Мăн Сĕнтĕрти больницăри пур уйрăм та сыхланса юлать. Районти тĕп больницăри ача-пăча уйрăмĕнчи 4 койкăна кĕскетнĕ май Мăн Сĕнтĕрти инфекци уйрăмĕнче ОРВИ,ОРЗ чирсемпе чирленĕ ачасене те сиплеме пуçламалла пулать.

### КУН ЙĔРКИНЧИ ЫТТИ ЫЙТУСЕМ

Чăваш Республикинчи хăй тĕллĕн çӳрекен машинăсемпе ытти техникăна техника тĕлĕшĕнчен мĕнле шайра пулнине пăхса тăракан Патшалăх инспекцийĕн ертӳçи – республикăри тĕп патшалăх инженер-инспекторĕ В.П. Димитриев кун йĕркине кĕртнĕ ытти ыйтусем çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Пĕчĕк тата вăтам предпринимательство субъекчĕсен ĕçне статистика тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассипе пĕтĕмĕшле федераллă сăнав ирттереççĕ. Çакă пĕчĕк тата вăтам бизнеса кĕрекен предприятисемпе уйрăм предпринимательсем мĕн ĕçленине, вĕсем мĕн туса кăларнине тĕплĕн тишкерме май парать. Пĕтĕмпе пирĕн районпа пĕчĕк тата вăтам 147 предприятипе 828 уйрăм предприниматель ĕçне тишкермелле.

Кун йĕркинчи тепĕр ыйту – 2010 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнчи «О внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации в части совершенствования оборота земель сельскохозяйственного назначения». Владимир Павлович çакна палăртрĕ. Пирĕн районта çĕр пайĕ пур çынсен мĕн пур йышĕнчен 28 проценчĕ вĕсене харпăрлăха куçарнă. Ку вăл республикăри вăтам кăтартуран пысăкрах кăтарту.

Пушă выртакан çĕрсене илес пулсассăн район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ В.А. Калинин палăртнă тăрăх пĕлтĕр пурĕ 2275 гектар пулнă пулсан, пĕлтĕр вĕсенчен 975 гектарĕ çинче ял хуçалăх культурисене çитĕнтерсе илнĕ е çакна валли хатĕрлесе хăварнă. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнче ку проблема çук. Ку тăрăхри фермăсем тăрăшнипе кунта пĕр саплăк çĕр те пушă выртмасть. Çавăнпа та Владимир Аркадьевич калашле вĕсен ку енĕпе юнашарти Катькас тата Ильинка ял тăрăхĕсенчи (шăпах ку ял тăрăхĕсенчен пушă выртакан çĕрсем ытларах) çĕрсемпе усă курас ыйту пирки шутласан та ытлашши пулмĕ.

В.П. Димитриев çавăн пекех икĕ тĕл пулура та коммуналлă пулăшусен тарифĕсем çинче чарăнса тăчĕ. Вăтамран вĕсем 15 процент чухлĕ ӳсеççĕ. Транспорт çинчи хаксем те хăпараççĕ. Хулара автобуспа çӳреме малашне 12 тенкĕ, троллейбуспа 11 тенкĕ тӳлемелле пулать. Хула çумĕнчи, хуласем хушшинчи автобуссемпе çӳреме те çул укçи те, проезднойсен хакĕсем те хальхи шайрах юлмаççĕ.

Кăçал Ю.А. Гагарин пĕрремĕш хут тĕнче уçлăхне вĕçнĕренпе 50 çул çитет. Çавна май Владимир Павлович 2011 çул Раççейре Раççей космонавтикин çулталăкĕ пулнине палăртрĕ. Республикăра çакăнпа çыхăннă мероприятисене палăртаççĕ. Районта, ял тăрăхĕсенче иртекен мероприятисене çак çулталăк ячĕпе çыхăнтармаллине палăртрĕ вăл.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хăйĕн сăмахĕнче çулсене тытса тăрас ыйту çинче чарăнчĕ. Кăçалхи хĕл çакна валли уйăрнă укçа-тенкĕне пĕтĕмпех тенĕ пекех хăвăрт тăкаклама «пулăшрĕ». Çавна май ку тĕлĕшпе район бюджетне çĕнĕрен пăхса тухмаллине палăртрĕ. Пĕрлехи информаци кунне пĕтĕмлетсе вара Юрий Александрович çапла каларĕ:

– Пирĕн сирĕнпе пĕрле пур енĕпе те калаçса татăлса халăхăн пурнăç шайне лайăхлатассишĕн пĕр тĕллевлĕн ĕçлемелле. Урăхла çул çук, – терĕ.

Икĕ тĕл пулура та ыйтусем чылай пулчĕç. Вăл шутран район шайĕнче татса памаллисем те, республикăна тăратмаллисем те.

Юлашкинчен информаци кунне хутшăнакансем ĕçе пĕтĕмлетрĕç. Халăх хускатнă ыйтусене татса памалли çул-йĕре палăртрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Кил тата хушма хуҫалăх



## Тутлă компот

**Типĕтнĕ улма-ҫырла вăррисене уйăрмалла. Грушăпа пан улмине уйрăм вĕретмелле, мĕншĕн тесен вĕсем ытти ҫимĕҫсенчен ытларах пиҫеҫҫĕ. Улма-ҫырлана 3-4 хутчен ăшă шывпа ҫуса илмелле те вĕрекен шыва ямалла. Грушăсемпе пан улмисем 35-40 минут пиҫеҫҫĕ пулсан, ыттисем – 15-20 минут кăна.**

Ыйту – хурав

## Ăратлă кролик ĕрчетер

***Эпĕ кролик ĕрчетсе пăхасшăн, анчах та вĕсем пирки нимех те пĕлместĕп. Ҫавăнпа та сирĕн хаҫат урлă кун пирки ытларах пĕлме ҫук-ши?***

**А. ИВАНОВА.**

Кролик хăйне евĕр ачаш чĕр чун. Ăна пахалăхлă апат, таса читлĕх кирлĕ. Йыш хушас тапхăрта уйрăмах вĕсене пысăк тимлĕх уйăрмалла.

21 кун хушшинчи ҫурă йывăрăшĕ 400-500 грамм чухлĕ пулать. Пĕр уйăх ҫитсен вара унăн виҫи 800-900 грампа танлашать, 45 кунрин йывăрăшĕ 1200-1400 грамм чухлĕ. Виҫĕ уйăх ҫурă тултариччен кролика ытларах ҫитермелле. Ун хыҫҫăн вара апат шайне пĕчĕклетмелле. Ытлашши самăртнă кролик ҫăвăр илес енĕпе пахалăхсăр шутланать. Вĕсене пĕтĕлентерес тапхăр умĕн пĕр эрне хушши каллех апат виҫине ӳстермелле.

Пĕр йăхри кролик аҫипе амине пĕтĕлентерме кирлĕ мар. Унсăрăн вĕсен урисем е ытти пайĕсем тĕрĕс мар аталанĕҫ. Ҫăвăрлас умĕн кролик ăшă йăва хатĕрлеме тытăнать, хăй ҫинчи мамăка тăпăлтарать. Тин ҫеҫ кун ҫути курнă ҫăвăрсем валли питĕ ăшă кирлĕ. Хăш-пĕр ама мамăкран йăва хатĕрлемесен те пултарать. Ҫавăн пек чухне асăрханмалла. Амана ытлашши хуйхатмасăр ун ҫинчи мамăка татса йăва туса памалла.

Ҫăвăрланă хыҫҫăн ăна таса шыв питĕ кирлĕ, унсăрăн вăл ҫав самантра ҫăвăрсене ҫисе яма пултарать. Тин ҫеҫ ҫăвăрланă амана тата ҫăвăрсене ытлашши тинкерсе пăхма кирлĕ мар. Ҫав вăхăтра вĕсем патне унччен пачах пыман ҫыннăн пымалла мар. Енчен те йăвара лăпках мар пулсан амана ытлашши пăлхатмасăр ҫăвăрсене асăрхăр. Вĕсем выҫă пек тата вĕсен йышĕ ытларах туйăнсан ама ҫумне 8-10 ҫăвăр хăвармалла. Хăшпĕр кролик ытларах та ҫăвăрлать. Анчах та унăн сĕчĕ сахалтараххине туйăр пулсан 1-2 ҫăвăрне сахалтарах ҫăвăрланă кролик ами патне яма пултаратăр. Ҫак ĕҫе пурнăҫлас умĕн вара амана пĕр самантлăхлăх аякка илмелле те 1-2 ҫăвăрне малтанхи мамăкран тасатмалла, хурса парас йăвари мамăкпа кăшт кăна сăтăркаламалла, йăва таваррине хурса памалла.

Ҫапах та 8-10 ҫăвăр ҫурлакан амасем лайăххисем шутланаҫҫĕ. Вĕсем вара вăтамран 120 ҫăвăр ҫурласа ӳстерме пултараҫҫĕ. Пĕр уйăх ҫурă ҫитсен ҫăвăрсем амăш сĕчĕсĕр те пурăнайраҫҫĕ.

**С. МИХАЙЛОВ.**

Пĕлме интереслĕ

## Тĕрĕс апатланар

Сĕтел ҫинчи апат пирĕн сывлăхпа тачă ҫыхăннă. Ҫупа ăшаланă ҫимĕҫ тутлă, анчах та сывлăхшăн сиенлĕ. Ҫатма ҫинче кирек епле ҫу та пысăк температурăпа сиенлĕ хутăш кăларать. Ăшаланă ҫимĕҫ хăйĕн ҫумне ытлашши ҫу туртать. Ҫакăнтан вара диабет, атеросклероз, инфаркт, инсульт, рак, чĕре чирĕсем пуҫланма пултараҫҫĕ. Хăвăрт хатĕрленекен тата хатĕрленĕ апат-ҫимĕҫ те сывлăхшăн сиенлĕ.

Хăшĕсем вара уҫă ҫулăм ҫинче ăшаланă шашлыка усăллăрах тесе шутлаҫҫĕ. Ҫак шухăш тĕрĕс мар. Аш ҫинчен тумланă ҫу уҫă ҫулăм ҫине ӳкет, бензопирен, нафталин йышши сиенлĕ хутăш пулса ҫимĕҫ ҫине куҫать. Тĕтĕмленĕ кăлпасси, пулă йышши ҫимĕҫе те усăллă тесех калаймăн. Вĕсенче онкологи чирне пуҫарма пултаракан тытăмсем пур.

Ҫавăнпа та ытларах чухне чĕрĕ апат-ҫимĕҫ, шыв е пăс ҫинче пĕҫернине ҫиме тăрăшмалла. Вĕсем вара чылай усăллăрах. Тасатнă тип ҫу, пальма, олива ҫăвĕсемпе усă курма тăрăшăр. Сывлăха пултăр.

**И. ВАСИЛЬЕВ.**

# Ĕмĕрĕпех выльăх-чĕрлĕх усраҫҫĕ

***Йӳҫкасси ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкасси ялне хĕвел ансан пырса тухрăм. Акă эпĕ ҫитнĕ кил-ҫурт. Ҫула урамранах сарлакан уҫнăран кунта чăн-чăн пурнăҫ хуҫисем пурăнни каламасăрах паллă пулчĕ. Пĕрремĕш ӳкерчĕкренех кунта ял пурнăҫне юратакансем тата килти хушма хуҫалăха аталантарассине мала хуракансем тĕпленни палăрчĕ.***

Аталану ҫулĕпе – пĕр тикĕссĕн



Кил хушшине кĕрсенех мана сăпайлă калаҫакан кинемей ăшшăн кĕтсе илчĕ.

– Паллаймарăм-ха сире. Мĕн ҫăмăлпа ҫитрĕр-ши пирĕн патăмăра? Мĕнпе пулăшайрăпăр? – пĕрле килнĕ Саша ывăлĕпе Юлия кинĕ ҫине пăхса калаҫрĕ пит ҫинчи пĕркеленчĕксене аллипе шăлса илсе.

П а л л а ш р ă м ă р. Пĕрремĕш утăмранах мана ырă курăннă хĕрарăм пире сивĕпе тавлашса тăмасăр пӳртелле иртме сĕнчĕ. Тĕпелелле иртĕпĕр-ха та, анчах манăн хамăн тĕллев... Редакци планĕпе килĕшӳллĕн ман умра тăракан Галина Николаевнăпа пӳртрен кăштăртатса тухакан Константин Иванович Кирилловсем килти хушма хуҫалăха аталантарассипе епле ĕҫленипе паллашмалла. Каласа хăвармалла, ялта пурăнакан вун-вун ҫемьери пекех Кирилловсен хуҫалăхĕнче те выльăх-чĕрлĕхпе тата кайăк-кĕшĕкпе ĕҫлессине кил хуҫалăхра тĕпленнĕ кĕҫĕн хĕрĕпе кĕрĕвĕн ҫемйи хăй ҫине илнĕ.

– Ҫамрăксем хыҫĕнче пурăнма пулать, анчах вĕсем хăйсен ĕҫĕсемпе аяккалла тухса ҫӳренĕ чух килти хушма хуҫалăхшăн эпирех яваплă пулса юлатпăр. Хамăр та выльăх-чĕрлĕх усрасах, ăна Шупашкар пасарне кайса сутса тунă укҫа-тенкĕпех икĕ ҫурт лартрăмăр. Унччени 2 чӳречеллĕ пӳрт пирки паян каласан ялта та ĕненекен пулас ҫук. Пурăнмалли ҫурт пĕчĕккĕ пулнă пулсан та эпир килти хушма хуҫалăхра выльăх-чĕрлĕх тытасси ҫине алă сулман. Вăл пирĕн яланах хушма тупăш ҫăл куҫĕ пулнă. Ăна тытса пыни 3 ывăлпа 2 хĕре ĕҫе юратса ӳстерме пулăшрĕ, – хăлхи витĕрех илтменнипе сывăхарах ларса калаҫать Константин Иванович.

1932 ҫулхи авăн уйăхĕн 25-мĕшĕнче нумай ачаллă хресчен ҫемйинче ҫуралнă арҫын ĕмĕрĕпех килти хушма хуҫалăхра выльăх ĕрчетсе пурăннă: ача чух ашшĕ-амăшне пулăшнă, каярах хăй ҫемйине тăрантарнă. 50 ҫул каялла Ҫĕмĕрткасси хĕрĕпе Галинăпа пĕр ҫемье ҫавăрсан та мăшăр килти хушма хуҫалăха аталантарассине иккĕмĕш вырăна хăварман. Константин Иванович «Ударник» хуҫалăхра механизаторта, Галина Николаевна тăван хуҫалăхра тата «Росгосстрах» страхлакан компанире ĕҫлесе те килти хушма хуҫалăх пирки манман.

Ылтăн туй ӳсĕмне ҫитнĕ Кирилловсем пурнăҫри ҫак паллă куна ҫĕкленӳллĕ кăмăлпа кĕтсе илеҫҫĕ. Костьăпа Галина шăпах 50 ҫул каялла кăрлачăн 17-мĕшĕнче венчете тăнă. «Ун чухне те сивĕччĕ, ҫĕнĕ пурнăҫ пуҫламăшĕнче тăнăран-ши, ҫанталăк уйрăмах илемлĕ пулнă пек туйăнатчĕ», – терĕҫ хур-кăвакал патĕнчен пӳрте кĕрсе сĕтел хушшине ларсан ачисем парнеленĕ чей чашăкĕсене алла илсе ăшă кăмăллă ĕҫ ветеранĕсем.

Хресченсен пĕрлехи 50 ҫулĕ пĕрре те тикĕссĕн иртмен. Сахал мар йывăрлăха ҫĕнтернĕ вĕсем. Кашни ҫĕнтерӳ никĕсĕнче вара килти хушма хуҫалăхри ĕҫхĕл тăнă. Хуҫалăхра ĕҫлесе таврăнсан та, аякри ҫулҫӳреврен килсе килти выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕҫлесен тата пахчана тухса ҫум ҫумласан та, хăйсен вăйĕпе лартса ӳстерекен ҫимĕҫсем ҫине пăхсан та ывăнни иртсе каятчĕ ҫав вĕсен.

– Сысна пусаттăмăр та ăна пусса Шупашкар пасарне кайса сутса тунă укҫа-тенкĕн тĕп пайне перекет банкне пӳрт тума хурса пынине ниепле те манайрас ҫук, – терĕ ырă кăмăлĕпе палăракан Галина Николаевна мăшăрĕ ҫине пăхса.

34 ҫул «Ударникра» гусеницăллă 5 тĕрлĕ «хурçă утпа» ĕҫленĕ К. Кириллов хуҫалăхра яланах малтисен ретĕнче пулнăскер обществăлла ĕҫрен те пăрăнман. Вăл пĕрре мар Йӳҫкасси ял совечĕн депутачĕ пулнă, ялти пурнăҫа илемхăт кĕртессишĕн тăрăшнă.

– Ҫурхи-кĕрхи акара, вырмара вăй хунипе пĕрлех вăл ҫулсенче ялти пĕвесене пĕвелессипе, ялсем хушшинче ҫулсем тăвассипе манăн бульдозер канма пĕлместчĕ, – каласа парать сĕтел ҫине медальсемпе пилĕк ҫуллăх ҫĕнтерӳҫисен хучĕсене, Хисеп грамотисене кăларса хунă май 1-мĕш класлă механизатор.

– Килти хуҫалăхра 2-3-шер ĕне те усраса, витере 5 сыснана та ҫитерсе, малашлăха пăхса вăкăрсем тытни те пĕр ҫул ҫеҫ пулман. Халĕ ҫамрăксем патшăлăх пулăшнипе усă курса хур-кăвакал ĕрчетесси ҫине куҫрĕҫ. Ҫамрăксенче – малашлăх. Эпир вара вĕсене тĕкĕ паракансем, – терĕ ĕҫ ветеранĕ Галина Николаевна пĕр сĕтел хушшине пухăннă ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрĕвĕ ҫине ăшă кăмăлпа пăхса. Вĕсен те паян хăйсен хушма хуҫалăхĕсем, анчах ун пирки тепĕр калаҫура.

**А. БЕЛОВ.**

# Паха сĕт – пĕлтерĕшлĕ ыйту

Хуҫалăхра



Ялта пурăнакан хăйĕн кун-ҫулне ĕне усрамасăр курмасть те. Ахальтен мар асаттесемпе асаннесем ĕнене ҫур пурнăҫ тесе хакланă. Ҫак ăнтăлу паян та иксĕлмен-ха.

Сĕт – биологилле продукт. Унăн тытăмĕнче 200 ытла усăллă компонент. Вĕсен шутĕнче тулли пĕлтерĕшлĕ 20 аминокислота, 147 ҫу кислоти, 4 тĕслĕ сахар, макро- тата микроэлементсем – 30, тĕрлĕрен витаминсем – 23, глицеридсемпе фосфатидсем, ферментсемпе пигментсем тата ыттисем те. Хими составĕпе тата апат пахалăхĕпе сĕтпе танлашаканни ҫук. Вăл тин кăна ҫуралнă чĕр чунсемшĕн те, кирек хăш ӳсĕмри ҫыншăн та питĕ вырăнлă апат-ҫимĕҫ. Пĕр литр сĕтĕн энергетика хăвачĕ 3000-4000 Джоульпе танлашать (1кДж 0,239 ккал пулать тесе шутламалла).

1 литр сĕт пулма ĕне ҫилли витĕр 400-500 литр юн иртмелле. Тĕслĕхрен, сĕт вăтам паракан ĕнен ҫилли витĕр талăкра 8-10 тонна юн иртет. Ĕнен продуктивлăхĕ мĕн чухлĕ пысăкрах – унăн сĕт парĕнчи сĕт ҫаврăнăшĕн хăвăртлăхĕ те ҫавăн чухлĕ ытларах.

**Ĕнесене апатлантарни тата пăхса усранин условийĕсем.** Сĕтĕн пысăк продуктивлăхĕ ĕне валли унăн юнĕнче сĕт йĕркелекен хатĕрсем тăтăшах пулни кирлĕ. Ҫакна, малтанах, выльăха тулăх тата вăхăтра тăрантарнипе пурнăҫлама пулать. Иккĕмĕшĕнчен, рационта тĕрлĕ компонентсем пулни апата организма кирлĕ хатĕрсем тĕлĕшпе шайлаштарма пулăшать.

Ĕнесен рационĕнче тулли пахалăхлă апат ытлă-ҫитлĕ пулмалла. Малта пыракан хуҫалăхсенче пăруламалли ĕнесене сумаллисенчен пахарах тăрантарнине асăрхама пулать. Тутлăхлă япаласем ĕнене уйрăмах пăрулас умĕнхи икĕ эрне хушшинче ҫителĕклĕ кирлĕ. Кунпа пĕрлех вĕсене уҫăлма часчас илсе ҫӳрени те пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Паянхи ҫĕр ĕҫ структурипе балансла рацион тытса пырасси хуҫалăхсенче хĕллехи вăхăтра уксахлать. Анализсем хĕллехи апатра протеин, фосфор, кобальт, йод, А тата Д витаминсем ҫителĕксĕррине кăтартаҫҫĕ. Ҫавăнпа та ĕнесен ытларах сĕт антараслăхĕ ҫу вăрринче 2-2,5 уйăх пулсан, авăн-чӳк уйăхĕсенче сăвăм палăрмаллах чакса каять.

Сĕт нумай антаракан кĕтӳ йĕркелесе ярса ял хуҫалăх производство кооперативĕсенче тата килти хушма хуҫалăхсенче ытларах сĕт сăвас тесен симĕс конвейер пулни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Ҫакна валли вăйлă апат бази кирлĕ. Ĕнерен ҫулталăкне 4000 кг сĕт сума выльăхăн чĕрĕ виҫи ҫут ҫанталăкăн ырă кăтартăвĕсемпе 500 килограмран ытларах таймалла.

Сĕт антаракан ĕнешĕн календарлă ҫулталăк икĕ тапхăра пайланать: сĕт антарнă вăхăт тата пăрулама хатĕрленнĕ тапхăр. Пĕрремĕшĕ татах икĕ пая пайланать: улăх-ҫаранта ҫӳретнĕ тапхăр тата витесарайĕнче тытнă уйăхсем. Ĕнесем улăх-ҫаранта вăтамран 135 кун ҫӳреҫҫĕ пулсан, 230 кунне витере тăрса ирттереҫҫĕ.

Ĕне продуктивлăхне ҫӳллĕ шайра тытас тенĕн ҫаксем пирки манма юрамастех.

**В. ИЛЬИН,**
**выльăх тухтăрĕ.**

Сĕтел хушшинче

## Пуҫлă суханран – салат

Ăста кил хуҫи арăмĕ пуҫлă суханран паха салат хатĕрлеме пултарни паллă. Ҫакна валли 2-3 пуҫ сухан илмелле те ҫавран касса салатницăна хумалла. Вĕри шыв ярса 20 минут лартмалла. Хыҫҫăн ăна тăкса сивĕ шывпа ҫумалла. Тасалнă сухан ҫине майонез хурса ҫиелтен кăштах сахăр песукĕ тата пăрăҫ сапмалла. Тĕплĕ хутăштармалла та «пиҫсе ҫитме» ҫур сехет вăхăт памалла.

## Купăстаран

Нӳхрепрен илсе тухнă купăстана вĕттĕн турамалла. Терка витĕр кăларнă пĕҫернĕ кăлпассипе хутăштармалла. Пулнă хутăш ҫине бекон тутиллĕ чипсы сапмалла та майонез хушса тĕплĕ хутăштармалла. Тутă кĕме 1-2 сехет тытнă хыҫҫăн сĕтел ҫине лартма та юрать.

**Р. СОРОКИНА.**

# Кăмăл çирĕплĕхĕпе йĕрке кирлĕ

## Çул çитменнисен ыйтăвĕсемпе

***Январĕн 19-мĕшĕнче район администрацийĕ çумĕнчи çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлекен комисси кăçалхи пĕрремĕш ларăва пуçтарăнчĕ. Административлă йĕркене пăснисем ку хутĕнче те чылайăн пулчĕç.***

Кашнин йĕркесĕр ĕçне, кашнин пурнăçне тишкерсе комисси пурне те тĕрĕс пĕтĕмлетӳ патне çывхартрĕ темелле. Йĕркене пăсни вара тĕрлĕ енлĕ. Ашшĕ-амăшĕ ачисене кирлĕ пек воспитани паманни, çул çитменнисем хулана вĕренме кайнă хыççăн тĕрĕс çултан пăрăнни, çамрăксем эрех-сăра ĕçни тата ытти те.

Нумая тăсăлнă уяв кунĕсенче ачисем пирки манакан ашшĕ-амăшĕ пĕрре мар пулнă. Акă Чĕпĕлкассинчи пĕр мăшăр та канмалли кунсене тимлесех уявланă. Районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем вĕсем патне çитнĕ вăхăтра пӳртре тирпейсĕрлĕх, таса марлăх хуçаланнă. Аслă арçын ачи вара пӳртре ытла та сивĕ пулнăран кăмака хутассипе тимленĕ. Хăй кăна мар вĕт, унран пĕчĕкрех йăмăкĕ те пур. Ашшĕпе амăшĕ вара (иккĕшĕ те хĕрĕх çула та çитменскерсем!) кунĕпех хăнара çӳренĕ. Черкке хыççăн черкке пушатнă, киле килсен харкашу пуçланă. Килте ларакан ачисене пӳрт ăшăтса парасси, вĕри апат пĕçерсе çитересси пирки шутлама вăхăчĕ пулман. Харкашу сăлтавĕ мĕнре пулнине ыйтсан «ревность» тенине çеç илтме пулчĕ. Ачасем вĕсем çав «ревность» мĕнне ăнланмаççĕ. Вĕсене малтанах лайăх ашшĕпе амăшĕ, пурăнма хăтлă ăшă пӳрт тата тимлĕх кирлĕ. Кун пек харкашусем мăшăр хушшинче малтан та пулнă-ха. Упăшки Мускава тата ытти хуласене ĕçлеме тухса çӳренĕрен ĕнтĕ. Çĕнĕ пӳрт хăпартма та пуçланă хăйсем. Капла вăрçса-хирĕçсе пурăнсан вара ачисене хăтлă та ăшă пӳртре ӳстерейĕç-ши? Хăйсен пепкисене халĕ кирлĕ пек пăхмасан ватлăхра ырăпа таврăнать-ши тата çакă? Иккĕленетĕп.

Тата тепĕр ача амăшне сӳтсе явни те нумайлăха асра юлать пулĕ. Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчен вăл. Анна вара амăшĕ тесе калама та пулмасть пуль. Хĕрарăм маларах упăшкинчен судпа уйрăлнă. Ачисене вара суд амăшĕпе юлма йышăну тунă мĕн. Анчах та ачисем амăшне курмаççĕ те. Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнче тухса кайнă та вăл Шупашкара «ĕçлеме», паян кун та çук. Хăй ăçтине пĕлтермест те çерçи пек сиккелесе çӳрекенскер. Кукамăшĕпе кукашшĕ тимлеççĕ ачасемшĕн. Куккăшĕсем ачасене тумлантарма пулăшаççĕ. Çапла янтă пурнăçа курса хĕрарăм хăй пирки кăна шутлать. Унран укса-тенкĕ мар, хыпар та кĕтсе илеймеççĕ ашшĕпе амăшĕ. Ачисене пăхнăшăн тав сăмахĕ те илтеймĕç паллах. Тивĕçлĕ канăва тухнă ватă çынсен вара пенси укçи те пĕчĕк.

Çакăн пек ашшĕ-амăшне саккун ыйтнă пек тĕрлĕ калăпăшлă штрафсем парса явап тыттарма йышăнчĕç комиссинче. Вăрлакан, хулиганла ĕçсем тăвакан çул çитмен çамрăксемшĕн те ашшĕ-амăшĕнех штраф тӳлеме тивет. Хулана кайсан «эпĕ» тени таçта кайса çухалать пулмалла ял çамрăкĕсен. «Çук» теме пĕлмеççĕ нумайăшĕ. Çавăнпах çирĕплĕх çуккисене часах преступленисем тума шалтан та шала кĕртсе яраççĕ те «аслăраххисем». Апла ашшĕ-амăшĕн ачисене хăйсен çунатти айĕнче пулнă чухнех хулари ирĕклĕхре çухалса каймалла маррине лайăх ăнлантармалла. Кая юлсан каю шăтать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Тренерсем пирĕн ачасем патне çитессе шанас килет

## Спорт тата çамрăксем

Сыпай, Оринин тата Муркаш шкулĕсен хоккей командисем çĕнĕ çула çĕнĕ çитĕнӳсемпе пуçларĕç. Кăрлач уйăхĕн 12-мĕшĕнче Орининти тата Сыпай шкулĕсенче вĕренекенсен пĕрлешӳллĕ команди Красноармейскинче иртнĕ зонăри вăйăсене хутшăнчĕ. Элĕк, Вăрмар, Красноармейски тата Муркаш районĕсенчи 1996–1997 çулсенче çуралнă ачасем вăй висрĕç унта. Оринин шкулĕнче вĕренекенсем висĕ гол, Сыпай шкулĕнче вĕренекенсем те висĕ гол кĕртсе командăна пĕрремĕш вырăна кăларма пултарчĕç.

Кăрлач уйăхĕн 14-мĕшĕнче вара Муркаш, Элĕк тата Красноармейски районĕсенчи 1998–1999 çулсенче çуралнă яшсем пăр çине тухрĕç. Район чысне Муркашри «Сывлăх» ФСК-ра ăсталăха туптакансем тата Сыпай шкулĕнче вĕренекенсем хӳтĕлерĕç. Каллех – çĕнтерӳ! Муркашсем пĕрремĕш вырăна тухма пултарчĕç. ФСК-ра ачасемпе ăста тренерсем ĕçлени куç кĕрет: вăйăра вĕсен тӳпи пысăкрах пулчĕ.

2010 çулхи раштав уйăхĕнче Сыпайра хоккей курупкине усă чухне районтан килнĕ хăнасем пухăннă халăх умĕнче пирĕн ачасемпе те тренерсем ĕçлеме пуçлĕç тесе шантарчĕç. Анчах вĕсем пирĕн ачасем патне ку таранччен килмерĕç-ха. Е пирĕн ачасене тренер та кирлĕ мар тесе шутларĕç-ши? Ачисем, паллах, матурсем. Иртнĕ хĕл кунĕсенче хăйсене лайăх енчен пĕрре мар кăтартрĕç. Анчах пăр çинче хăйсене тĕллĕн кăна ярăннипе ăсталăх ӳсĕмĕнни паллă.

Пирĕн, Сыпай шкулĕнче вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсен, хоккей вăййин ăсталăхне алла илме пулăшакан тренерсем пирĕн ачасем патне çитессе шанас килет. Ку ыйтăва кая хăвармасăр татса парсан аван пулĕччĕ.

**Н. ЯКОВЛЕВА, нумай ача амăшĕ.**

# Чăвашсен хаçатне сума суса

## «Хыпар» – 105 çулта

Январĕн 20-мĕшĕнче Чуманкасси ял библиотекинче «Хыпар» хаçат кун çути курнăранпа 105 çул çитнине халалласа çавра сĕтел иртрĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Л.Г. Ковалева, пуçламăш классене вĕрентекен Т.А. Павловăпа В.Э. Федорова, чăваш чĕлхи учителĕ А.Н. Ефимовăпа маларах шкулта çак предмета ертсе пынă Н.А. Димитриева ветеран педагог та çак ĕçе хутшăнчĕç.

Чăвашсен пĕрремĕш хаçачĕн пирвайхи номерĕ, ун хыççăнхисем те çирĕп цензура витĕр тухнине, Н. Никольский хаçата хăйĕн укçипе кăларма тытăннине пĕлни ачасемшĕн питĕ интереслĕ пулчĕ. Надежда Алексеевна каласа панинчен ачасем хаçатăн малтанхи номерĕсем валли Тайăр Тимкки çĕрĕ-çĕрĕпех статьясем, сăвăсем çырнине те пĕлчĕç. Н. Никольский çак çамрăка питĕ хисепленине те, хаçата çулталăклăх çырăнас текенсем Хусана висçшер тенкĕ куçарса панине те, хаçатăн пĕрремĕш номерĕ 1500 экземплярпа тухнине те.

Акă мĕнлерех пулнă иккен чăваш журналистикин малтанхи тертлĕ утăмĕсем. Паян вара «Хыпар» – республикăн сумлă хаçачĕ. Анă тĕрлĕ вырăнта пурăнакан чăвашсем те илсе тăраççĕ. Апла пирĕн ентеш пуçарнă ĕç паян аталансах пырать. Çакна пĕтĕмлетсе ялти библиотекарь З.И. Иванова: «Хыпар» пĕтĕмпех чăваш та сыхланса юлать, чăвашсем пулсан «Хыпар» та пурăнать», – терĕ.

Калаçăва хутшăннисене итлесе ачасен шухăшĕ уçăмланни сисĕнчĕ, вĕсен ыйтусем те çуралчĕç. Уяв каçĕпе пурте кăмăллă юлчĕç.

**З. ИВАНОВА, библиотека ертӳçи.**

## Моргаушимежрайгаз предупреждает

**Уважаемые абоненты - пользователи газа!**

**В отопительный период** будьте внимательны в обращении с газовыми приборами, имеющими отвод продуктов сгорания в дымоход.

**Во избежание отравления угарным газом, для предотвращения несчастных случаев в быту, связанных с использованием газа, необходимо:**

- следить за нормальной работой газоиспользующего оборудования, исправностью дымовых и вентиляционных каналов, очищать эти каналы от засора;
- проверять тягу до включения и во время работы газовых приборов;
- не допускать установку шиберов в дымоходах от приборов и не перекрывать вентиляционные каналы, обеспечить достаточный приток воздуха в помещение при работающем газоиспользующем оборудовании;
- периодически проверять оголовки дымоходов и вентиляционных каналов с целью предотвращения их обмерзания и закупорки;
- заключить договоры на техническое обслуживание внутридомового газового оборудования и на поставку газа, обеспечивать специалистам газового хозяйства доступ к газовым приборам для проведения работ;
- не допускать самовольную перестановку, замену и ремонт газовых приборов;
- содержать в надлежащем техническом и санитарном состоянии помещения, где установлено газоиспользующее оборудование, и не использовать их для сна и отдыха;
- не пользоваться газовыми приборами при их неисправности и утечке газа, при отсутствии тяги в дымоходах и вентиляционных каналах, при нарушении плотности кладки, штукатурки газифицированных печей и дымоходов.

**При появлении запаха газа** немедленно прекратить пользование газовыми приборами, перекрыть краны к приборам и на приборах, открыть форточки, окна и двери для проветривания, вызвать из незагазованного помещения аварийно-диспетчерскую службу (АДС) филиала «Моргаушимежрайгаз» по телефонам 04 или 60-2-24. При этом не допускать открытого огня, не курить, не включать и не выключать электрические приборы и электроосвещение, не пользоваться электрозвонками.

**При отсутствии тяги и непригодности дымовых и вентиляционных каналов** незамедлительно сообщить об этом в управляющую организацию ЖКХ или в ВДПО, а также в филиал «Моргаушимежрайгаз» по телефонам:

- АДС филиала «Моргаушимежрайгаз»: 04 или 60-2-24.

**Уважаемые абоненты!**

**Соблюдайте правила пользования газом в быту!**

***Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз».***


**Я, собственник земельной доли Степанов Николай Иосифович, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли общей площадью 15,7 га, расположенного на территории землепользования бывшего ЗАО «Колос» Моргаушского района Чувашской Республики, Кадикасинского сельского поселения, участок расположен в центральной части кадастрового квартала 21:17:072501.**

**Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Кадикасинского сельского поселения.**

**Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории землепользования бывшего ЗАО «Колос» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемой в счет земельной доли, расположенной по адресу: ЧР, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, в центральной части кадастрового квартала 21:17:072501.**

**Заказчик работ, собственник в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Степанов Николай Иосифович, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Чурикасы, ул. Дружная, д. 25. Паспорт серии 9702 № 624669 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 12.09.2002 г.**

**Согласование местоположения границ состоится 22.02.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».**



**Продаем доски хвойные 25х150мм, 50х150мм, 50х200мм; брус любого сечения. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел.: 8-903-346-40-58. 7-10.**

**СПУТНИК. антенны «ТРИКОЛОР» 6800 рублей. 93 канала. Тел.: 8-906-385-29-30.**

**25 января с 9-00 час. до 17-00 час. в Моргаушском РДК состоится выставка-продажа обуви из натуральной кожи обувных фабрик г. Ульяновск, г. Казань, респ. Беларусь.**


## Прогноз погоды с 22 по 28 января 2011 года

www.yandex.ru

| сб 22 | вс 23 | пн 24 | вт 25 | ср 26 | чт 27 | пт 28 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| ясно | пасмурно, небольшой снег | пасмурно, временами снег | пасмурно | пасмурно | пасмурно | пасмурно |
| -24 | -17 | -10 | -8 | -11 | -13 | -13 |
| -22 | -17 | -9 | -11 | -13 | -16 | -12 |


Вăкăр, тына, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57.

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок**
**Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.**
**Песок, ОПГС (гравмасса), щебень**
**Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами. 1-50.**


## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 2-7.**

* * *

**Декор – мебель изготавливает любую корпусную мебель (кухни, прихожие, мини-стенки, детские, компьютерные столы) по размерам заказчика. Замер и доставка бесплатно. Гарантия качества. Предлагает услуги: установка дверей, укладка линолеума и ламинированных полов, устройство потолков, обшивка стен, устройство крыш и мансард, устройство сайдингом. Наш адрес: 429530, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 3. Тел.: 62-6-60, 8-905-343-08-10. 1-5.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку. Тел.: 8-905-342-39-43. 4-5.**

* * *

**Куплю бычков, телок и коров. Тел.: 8-919-671-96-26. 5-5.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 3-10.**

* * *

**СХПК «Герой» Моргаушского района ЧР приглашает на работу главного зоотехника. Заработная плата достойная. Обращаться по тел.: 67-5-79, 8-927-864-31-33. 2-3.**

* * *

**Продаю семена многолетних трав: люцерна, костер и клевер. Товар сертифицирован. Тел.: 8-952-022-55-60.**

* * *

**ЛЕЧЕНИЕ АЛКОГОЛИЗМА**
**(г. Чебоксары, пр. Ленина, 32А, тел.: (8352)55-16-60, 8-902-327-08-17). Лиц. № ФС21-000353 от 05.03.2010 г. Требуется консультация врача. 1-5.**

* * *

**Услуги буровой машины для рытья и углубления колодцев разного диаметра. Тел.: 8-903-379-09-01.2-5.**

* * *

**Августра улттăмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-903-063-46-69.**


Чуманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ шкулăн Исетерккĕри филиалĕнче чылай çул хушши пуçламăш классене вĕрентнĕ **Валентина Никандровна ИЛЛАРИОНОВА** вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

Сосновкăри тĕп шкул коллективĕ шкулăн Исетерккĕри филиалĕнче чылай çул хушши пуçламăш классене вĕрентнĕ **Валентина Никандровна ИЛЛАРИОНОВА** вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ Лантăш магазин заведующийĕн С.И. Колбасовăн **АШШĔ** вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн, тарăннăн хурланнине пĕлтерет.


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 21.01.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4275.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.